ШУХĂШ

# Вирьял Чĕлхи, эсĕ – Ылтăн, эсĕ – Ахах!

...Тĕрĕс мар-им? Тĕрĕс!.. Паян мар, тахçанах – вунă çул каярах, хĕрĕх çул каярах уççăн та ирĕклĕн калаçмаллаччĕ пирĕн, чăвашсен, КУ ТЕМĂПА.

Шел, калаçмарăмăр, çĕршер пин çынна тӳрремĕнех пырса тивекен çивĕч ыйтăва хускатмарăмăр, сӳтсе явмарăмăр: ма вак-тĕвек ыйтупа пăтранас, ма кăлăхах хумхантарас халăха?..

Анатри чăвашсене /хам та – анатри чăваш/ КУ ТЕМĂНА хускатма, ахăртнех мăнкăмăллăх тени ирĕк памарĕ-тĕр. Ара, чăваш литературин чĕлхи И.Я.Яковлева, анатри чăваша пула, пĕр ĕмĕр ытла анатри чăвашсен чĕлхин никĕсĕ çинче аталанать, анатри чăвашсен чĕлхи ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать – вирьял чĕлхине хĕснĕçемĕн хĕсет, кун пекех пулсан кĕçех, ак, вирьял диалектĕнчен нимĕн те тăрса юлмасть, пур чăваш та анатри чăвашсем пек калаçма тытăнать... Лайăх-и? Лайăх!

Вирьял-чăвашсене КУ ТЕМĂНА татăклăн, çине тăрса, саккунлă майпа хускатма, ахăртнех, ансат мар шăпи пилленĕ сăпайлăхĕ пе йăвашлăхĕ чăрмантарчĕ-тĕр: хускатса пăх-ха эсĕ никам та уççăн хускатма хăяйман ыйтăва, хӳтĕле-ха татăклăн вирьял чĕлхине – тем курса тăрăн тата...

...Çапла пурăнтăмăр эпир, чăвашсем – анатрисем, анат енчисем тата вирьялсем – ку тарана çитиччен, паян та çапла пурăнатпăр – кунсерен вирьял чĕлхи, Аслă Чăваш Чĕлхин пĕр пысăк, ытарма çук илемлĕ, урăх нимĕнпе те улăштарма, саплаштарма çук хăйнееврĕлĕ пайĕ, çурхи юр купи пек ирĕлнĕçемĕн ирĕлет, кĕçех пач çук пулса тăрать, эпир вара çак инкек пирки сăмах хускатма та хăратпăр...

...Килĕшетĕп, паллах, килĕшетĕп: калаçман мар КУ ТЕМĂПА – калаçнă. Анчах хамăр хушăра. Халăх çине кăлармасăр. Эп астăвасса, Александр Угольников, Чутай тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ тĕлĕнмелле пултаруллă та пысăк чĕреллĕ чăваш, иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче çырнă пĕр повеçне вирьял чĕлхине тĕпе хурса, е, тĕрĕсрех каласан, вирьялла çырчĕ. Элĕк тăрăхĕнчен тухнă Александр Волков, лайăх çыравçă, хăйĕн повеç-калавĕсенче усă куратчĕ вирьял сăмахĕсемпе, сăнарĕсене вирьялла калаçтарма тăрăшатчĕ. Шел, ун чухне çак пулăма, çак акцие, çак йыхрава шута хуракансем пулмарĕçпе пĕрех. Питĕ шел.

Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче, ку ĕмĕр пуçламăшĕнче /çулне астумастăп/ Муркашсем хăйсен энциклопедийĕ кун çути курнă ятпа Наци библиотекинче чаплă уяв ирттерчĕç. Мана та сăмах пачĕç çав уявра. Шăпах çавăн чухне сумлă хăнасен умĕнче эпĕ хамшăн пуçласа çак сăмахсене каларăм: «...Эпĕ – анатри чăваш, Комсомольски районĕнче çуралса ӳснĕскер. Анчах та мана тахçантанпах вирьял чĕлхин шăпи питĕ хумхантарать. Куратăп – вирьял чĕлхи, вирьял диалекчĕ куç умĕнчех çухалать, куç умĕнчех пĕтет. Ку – питĕ тĕрĕс мар! Вирьял чĕлхи – пĕтĕм чăваш халăх пуянлăхĕ, пĕтĕм тĕнче пуянлăхĕ! Вирьял чĕлхи пур чухне чăваш чĕлхи икĕ хут пуянрах, вирьял чĕлхисĕр чăваш чĕлхи – икĕ хут чухăнрах. Мĕн тери пысăк пуянлăх вăл – пирĕн чĕлхере «минтер» те пурри, «çитар» та пурри!.. Ман шутăмпа, КУ ЫЙТĂВА патшалăх шайĕнче çĕклеме вăхăт çитрĕ. Вирьял чĕлхине килес ăрусем валли çăлса-упраса хăварасси çинчен правительствăн ятарлă программа хатĕрлемелле, çакăн валли кирлĕ чухлĕ укçа уйăрмалла».

Ку вăл – 15-20 çул каярах пулса иртнинчен. Улшăнчĕ унтанпа мĕн те пулин? Çук!

Вирьял чĕлхи паян еплерех лару-тăрура аталанни пирки, унăн пуласлăхĕ çинчен кам та пулин сăмах хускатрĕ-и? Çук! Шел пулин те – çук...

...Çак статьяна пичетлесе «Хыпар» хаçат /ăна никĕслекенĕ – чăваш журналистикипе ăслăлăхĕн Патриархĕ Николай Никольский тури чăваш/ хăйне вирьял чăвашĕсен чĕлхи, йăла-йĕрки, тĕнчекурăмĕ, кăмăлĕ-сипечĕ питĕ кăсăклантарнине тепĕр хут пĕлтерет-çирĕплетет, сире, хисеплĕ вулакансем, вирьял чĕлхи пирки, унăн паянхи пурнăçĕпе пуласлăхĕ çинчен хăвăр мĕн шухăшланине çырса пĕлтерме ыйтать.

Пурсăра та сăмах паратпăр, пурин шухăшне те илтессе, сума сăвасса шантаратпăр.

Валери ТУРКАЙ